***Фомина Ираида Аркадьевна***
учитель
МБОУ «Тренькасинская СОШ»
д. Новые Тренькасы, Чувашская Республика

# О ПЕРСПЕКТИВАХ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА ПО РЕЗУЛЬТАТАМ ОПРОСА ОБУЧАЮЩИХСЯ И ИХ РОДИТЕЛЕЙ

***Аннотация****: в статье представлены материалы опросов населения Тренькасинского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики. Результаты обследований свидетельствуют о том, что количество разговаривающих на чувашском языке сокращается с каждым годом. В статье предпринята попытка раскрыть основные причины исчезновения языков, предложены свои варианты сохранения языков.*

***Ключевые слова****: родной язык, родители, обучающиеся, опрос, причины исчезновения языков.*

***Аннотаци****: статьяра Шупашкар районĕн Тренькасси тăрăхĕнче пурăнакансем хушшинче ирттернĕ ыйтăм хуравĕсене тишкернĕ. Чĕлхесем çухалнин тĕп сăлтавĕсене палăртма тăрăшнă, чĕлхесене упраса хăварас тĕлĕшпе хăйĕн шухăшĕсене çырса панă.*

***Тĕп сăмахсем****: тăван чĕлхе, ашшĕ-амăшĕ, ыйтăм, вĕренекенсем, чĕлхесем çухалнин сăлтавĕсем.*

«Ахалех пулчĕ-шим?» – тет И.Я. Яковлев вилес умĕн. Юлашки сăмахĕсем пулнă унăн. Çак ыйтăвах шкулта 38 çул ĕçленĕ хыççăн хама паратăп, тĕрĕссипе каласан, ку ыйту хăех тухса тăрать. Ку вăл ахальтен мар. 38 çул хам ĕçе чунтан юратса, чăваш ачине тăван чăваш чĕлхипе калаçтарас тесе ĕçлерĕм. Анчах та юлашки çулсенче чăваш çынни, унăн ачи хăйĕн тăван чĕлхинчен писни вăйлах палăрма пуçларĕ. Ку вăл, паллах, тĕнче шайĕнчи проблема. Çапах та эпĕ çак проблемăна, ыйтăва хамăр шайра мĕнле татса парасси пирки нумай шухăшларăм. Çултан-çул чăваш чĕлхине вĕрентме йывăрланнăçемĕн



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

йывăрланса пынин сăлтавне тĕпчесе пĕлес терĕм. Çак тĕпчев хыççăн ачасемпе мĕнлерех ĕçлемеллин çул-йĕрне палăртас терĕм.

«Çич енчен çич çулпа çитетпĕр манăçми кил-çурта, анне»... Çакăн пек çепĕç чĕлхепе пуплеме пăрахĕç-шим? Хăйĕн тăван чĕлхине маннă чăваш ятлă халăх пулса историнче çеç юлăпăр-ши вара?

Тĕпчеве пуçланă май хамăн ума çакăн пек тĕллевсем лартрăм:

1. ЮНЕСКО экспертсем мĕнле сăлтавсене пула чăваш чĕлхине çĕр çинчен çухалакан чĕлхесен списокне кĕртнине палăртасси.

2. Чĕлхе çухалма е упранса юлма пултарнине кăтартакан факторсене (сăлтавсене) вĕренекенсен, вĕсен ашшĕ-амăшĕсен шухăшĕ урлă палăртасси.

3. Калаçнă çынсен шухăшĕсене шута илсе чĕлхе пĕтес хăрушлăха мĕнле сирсе ямаллине кăтартасси.

4. Тĕпчев ĕçĕн результатне шута илсе тăван чĕлхене мĕнлерех вĕрентмелли çул-йĕре палăртасси.

Малтанах Тренкасси поселенийĕнче пурăнакан халăх йышне палăртăпăр: чăвашсем – 85,6%; вырăссем – 11,5%; тутарсем – 1,5%; марисем – 0,5%; мордвасем – 0,1%. Поселенинче пурăнакан чăвашсен йышне пăхсан тата шкулта вĕренекен ачасемпе, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçнă хыççăн чĕлхе шăпи пысăк хăрушлăхра та мар темелле. Тен, чĕлхене хирĕçлисем ку проблемăна ятарласа вĕрсе хăпартмаççĕ-ши? Чĕлхе çухалатех текен шухăша çын ăс-тăнне кĕртсе лартни икĕ çул патне илсе çитерме пултарĕ:

1. «Пĕтет! Пĕтет!» – тесе кăшкăрсан чăннипех те пĕтĕ. Пурпĕрех пĕтекен чĕлхепе кам хăйĕн ачине аталантарма тăрăшĕ.

2. «Хамăр та пĕтместпĕр-ха, чĕлхене те упрăпăр!» – текен шухăшлисем ниме пăхмасăр малалла талпăнĕç, аваллăхра темле йывăрлăха та чăтса ĕмĕрсем хушши упраннă чĕлхемĕре çухалма памĕç.

Чĕлхе шăпи, унăн пуласлăхĕ пăшăрхантарнине пула пилĕк çул каялла çак тĕпчеве пуçăнтăм. Вĕренекенсене, ашшĕ-амăшсене тăван чĕлхене тивекен ыйтусем парса хуравсем илтĕм. Пилĕк çултан çак ыйтусенех тăратса хуравĕсене танлаштартăм.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Вĕренекенсене панă ыйтусемпе хуравĕсем.*

*1. Эсĕ чăвашла калаçма пĕлетĕн-и?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Пĕлетĕп, калаçатăп | 32% | 17,33% |
| Пĕлместĕп | 2,66% | 10, 66% |
| Ăнланатăп | 44% | 60% |
| Пĕлетĕп, калаçма вăтанатăп | 21,33% | 14,66% |

*2. Шкулта чăваш чĕлхине вĕренни кирлĕ тесе шутлатăн-и?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Вĕренмелле | 97,33% | 92% |
| Вĕренме кирлĕ мар | 2,66% | 8% |

*3. Тăван чĕлхе пуласлăхĕ пур-ши?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Шкулта вĕрентмесен, хамăр калаçмасан çухалать | 38,66% | 54,66% |
| Тăван чĕлхе пурăнатех | 61,33% | 45,33% |

Чĕлхене манас марччĕ, ăна упрасчĕ тесе пăшăрханакан вĕренекенсен шухăшĕсене палăртса хăвармаллах.

1. Кашни уйăхра пĕр кун тăван чĕлхе кунĕ тумалла. Çав кун пурин те чăвашла калаçмалла, справкăсене те чăвашла çырмалла.

2. Если человек выучил и разговаривает на чувашском языке, то ему правительство должно дать льготы или материальную помощь.

3. На республиканском уровне надо проводить чувашские праздники, обычаи.

4. Если какой-либо начальник, директор не знает и не хочет выучить чувашский язык, то его оштрафовать.

5. Я думаю, что правительство должно обеспечить обучение чувашскому языку во всех школах.

6. Мы сохраним свой родной язык, потому что чуваши не сдаются. Язык наш не исчезнет никогда!



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Ашшĕ-амăшне панă ыйтусемпе хуравĕсем.*

*1. Эсир чăвашла калаçма пĕлетĕр-и?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Калаçатăп | 96,82% | 92,06% |
| Эпĕ чăваш мар, пĕлместĕп | 3,17% | 7,93% |

*2. Килте ачăрсемпе мĕнле чĕлхепе калаçатăр?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Чăвашла калаçатпăр | 38,09% | 17,46% |
| Чăвашла та, вырăсла та | 41,26% | 57,14% |
| Вырăсла çеç | 19,04% | 25,39% |

*3. Шкулта ачасене тăван чĕлхене вĕрентни кирлĕ тесе шутлатăр-и?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Кирлĕ | 95,23% | 98,41% |
| Кирлĕ мар | 4,76% | 1,58% |

*4. Тăван чĕлхе упранса юлĕ-ши?*

| | 2014 çул | 2019 çул |
|---|---|---|
| Калаçмасан, шкулта вĕрентмесен çухалĕ | 50,79% | 53,96% |
| Упранса юлатех | 42,85% | 46,03% |

Чĕлхене мĕнле те пулсан упраса хăварасси ашшĕ-амăшĕсене чăннипех пăшăрхантарать. Илер-ха вĕсен шухăшĕсене:

Ачасемпе килте пĕчĕкренех чăвашла калаçмалла.

1. Ачасем валли радио тата телепередачăсем чăвашла питĕ сахал. Уйрăмах ача тавра курăмне аталантармаллисем çук.

2. Правительствăра ĕçлекенсем чăвашла калаçмаççĕ, чылайăшĕ ку чĕлхене пĕлмеççĕ те.

3. Чăваш чĕлхине вăйпах вĕрентмелле мар, вĕрентсен те вăйăлла, хаваслă вĕрентмелле.

4. Республикăри музейсене, театрсене ачасене укçасăр илсе çӳремелле.

5. Ача садĕнчех чăвашла пуплеве аталантармалла. Вĕсем валли хитре ӳкерчĕклĕ кĕнекесем çукпа пĕрех.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

6. Хамăр халăхăн пуян историйĕпе, культурипе, хальхи вăхăтри çитĕнӳсемпе паллаштарсах тăмалла. Тăван культурăна вĕрентетчĕç маларах, халĕ пăрахăçларĕç.

7. Уроксен шутне чакарма пуçларĕç. Ку питĕ тĕрĕс мар.

8. Ачисене чăвашла калаçма вĕрентекен амăшне ача укçи çумне кăштах хушса тӳлемелле. Çакна çӳлте ларакансем татса памалла тесе шутлатпăр.

9. Патшалăх шайĕнче чĕлхене упрама май паракан ятарлă программăсем хатĕрлемелле.

Икĕ тапхăрти цифрăсене танлаштарсан çакна калама пулать: ачасем, ачасемпе ашшĕ-амăшсем пĕр-пĕринпе тăван чĕлхепе пуплесси чакса пырать; вĕренекенсем хушшинче пире чăваш чĕлхи кирлĕ мар текенсен йышĕ те ӳсет. Çав вăхăтрах шкулта тăван чĕлхене вĕренессине ачасем те, ашшĕ-амăшĕ те хирĕç мар, вĕсен йышĕ пысăк. Чĕлхе пуласлăхĕ пирки оптимистла шухăшлакансем те чылай. Çапах та чĕлхемĕр çухалас хăрушлăх пĕчĕкех мар. Çӳлте ларакансем вĕренекенсен, ашшĕ-амăшсен сăмахĕсене илтсе ăша хывсан тăван чĕлхемĕр йывăрлăхран çăлăнса тухĕччĕ.

Çĕр çинче 6 пин чĕлхерен 2500-шĕ çухалас хăрушлăхра иккен. ЮНЕСКО палăртнă тăрăх кашни 15 кун пĕр чĕлхепе калаçма пăрахаççĕ. Ку вăл пĕтĕм тĕнчипе. Пирĕн çĕр-шыври чĕлхесем пирки вара, вырăс чĕлхисĕр пуçне, пурте пĕтес хăрушлăхра теççĕ.

Мĕне пула пĕтет-ха чĕлхе? Ăна упраса хăварас тесен мĕн тумалла? Çухалнă е çакăн пек хăрушлăх умĕнче тăракан чылай чĕлхе шăпипе паллашрăм: тĕрлĕ сăлтава пула пĕтеççĕ. Хамăрăн тăван чĕлхемĕрĕн пуласлăхĕ çук тесе каласси çак сăлтавсенчен килет пулмалла.

1. Раççей çĕр-шывĕ тĕрлĕ вак халăхсене пĕрлештерсе тăрать. Патшалăх чĕлхи – вырăс чĕлхи. Паллах, пĕр-пĕрне ăнланас тесен пĕр чĕлхепе калаçмалла. Пуç пулса тăракан чĕлхе вара ытти вак чĕлхесене вăхăт иртнĕçемĕн хĕссе кăларса пырать.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

2. Вырăс чĕлхи – власть, закон чĕлхи. Телевиденипе радио, хаçат-журнал çĕр-шыври хыпарсене, политика, экономика пурнăçне вырăсла кăтартаççĕ, калаçаççĕ, çыраççĕ.

3. Пирĕн Республикăра патшалăх чĕлхи икĕ чĕлхе: чăваш тата вырăс чĕлхисем. Апла пулин те учрежденисенче тăван чĕлхепе калаçакансем питĕ сайра. Патшалăх канашĕн ларăвĕнче пĕр депутатран та чăваш сăмахĕ илтейместĕн. Документсем пирки каламалли те çук. Чĕлхе саккунĕн 4-мĕш пайĕнче 12-мĕш статьяри иккĕмĕш пункт пĕтĕм документсене чăвашла çырмалла тесе калать. Анчах та пĕр-пĕр документа чăвашла çырса парсан ăна чăвашла лайăх пĕлекен те ăнланмĕ.

4. Чăвашсен 49% кăна республикăра, ытти пайĕ тĕнче тăрăх сапаланни те чĕлхе пĕтессин пĕр сăлтавĕ.

5. Шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентмелле е вĕрентмелле мар тесе йышăнассине ниепле те шкул шайне антармалла мар. Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулсан ăна патшалăха ертсе пыракансен хӳтĕлемелле. Халь вара çак ирĕкпе усă курса хулари шкулсенче чăвашла пачах вĕрентме пăрахнисем те пур, ялсенчи шкулсенче те сехетсен шутне чакараççĕ.

6. Тепĕр сăлтав вăл – ăрупа ăру хушшинчи çыхăну пĕр чĕлхепе пулманни. Кукамăшне, ĕмĕрне ялта пурăнса ирттернĕскере, хулари учреждениcене килсен хăй нуши çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама вырăсла начар пĕлни чăрманатарать. Йăнăшсемпе калаçни, акцент вăйлă пулни ăна мĕскĕнлетет. Вăл вара çине тăрсах хăйĕн ачине вырăсла аталантарать. Чăвашла кăшт чухлакан, анчах пуплевне аталантарман хĕрĕпе вырăсла чухлакан амăшĕ хушшинчи чуна тивекен çыхăну, ăнлану татăлать. Акă вăл ăрупа ăру хушшинчи ăнланманлăх. Иккĕмĕш ăру хăйĕн ачине, паллах, чăваш чĕлхи парнелеймест. Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, чĕлхе генетикăна пăхăнмасть. Амăшĕ хăйĕн характерне, сывлăхне пама пултарать, анчах та ача чĕлхене амăшĕпе куçран куçа пăхса пуплесе кăна илме пултарать.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çак сăлтавсене шута илсен, чăнах та, чĕлхе пуласлăхĕ пирки савăнса калаçмаллиех çук теме пулать. Çапах та кун пек шухăша çирĕплетме васкас килмест, чĕлхене упраса хăварма май паракан сăлтавсене та асăнас килет.

1. Республикăна ертсе пыракансем чĕлхе сакунне йышăнни.

2. Вĕренекенсем те, ашшĕ-амăшĕ те чĕлхе шăпи пирки пăшăрханни, ăна упраса хăварас тесе ăнăçлă сĕнӳсем пани. (Çӳлерех асăннă ыйту-хуравсем.)

3. Телевидени, радио республика хыпарĕсене чăвашла пĕлтерсе тăрать. Ачасем валли, сахал пулин те, передачăсем тухаççĕ, вĕренекенсем «Тетте», «Самант», «Тантăш» хаçат-журналсене юратса вулаççĕ.

4. Чăвашла юрăсене, спектакльсене итлетпĕр-куратпăр.

5. Хулари вăтам тата аслă шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентни чĕлхен хисепне ӳстеретех.

6. Çак сăлтавсенчен чи паха та чи кирлĕ сăлтав вăл – халăх хăйĕн чĕлхин пуласлăхĕ пирки шухăшлама пуçлани.

Çак асăннă сăлтавсем пирĕн чĕлхе малалла та ырă-сывă пурăнассине ĕненме шанăç çуратаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсен, вĕренекенсен шухăшĕсене шута илсе правительство шайĕнче ятарлă программа йĕркелемелле. Тĕрĕссипе каласан, ним те шухăшласа кăларса çырмалла мар, акă вăл – хатĕр программа. Депутатсен умне каймалла та хумалла çак ĕçри ыйту-хуравсене. Нимĕнле проект-программа та укçасăр пурнăçланаймасть. Правительствăрисем тăван чĕлхене сыхласа хăварас тесе саккун çырни кăна сахал, программа ĕçлетĕр тесен укçа уйăрмалла. Программине вара «Анне» ятлă памалла, мĕншĕн тесен чĕлхене анне парать. Çуралас ачине чунтан-чĕререн юратса ăшĕнче чăвашла шухăшлакан, чăвашла пуплекен амăшĕн ачи те чăваш пулсах çуралать. Çуралсан «пепкеçĕм», «чĕппĕмçĕм» тесе çупăрлакан амăшĕн ачи чăвашлах çитĕнет.

Сăмах май каласан, ученăйсем тĕпченĕ тăрăх, пĕр чĕлхепе калаçакан ачан пуç мимин пĕчĕк пайĕ кăна аталанать иккен. Çакăн пек ача хăйне тĕрлĕ енлĕ (творчествăлла) аталантараймасть.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

«Чăваш чĕлхине вĕрентме çав тери йывăр. Эсир, тăван чĕлхене вĕрентекенсем, Турă ĕçне туса пыратăр. Турă ĕçĕ – чăвашлăха упраса хăварас ĕç», – терĕ пĕр тĕл пулура вырăс кафедрин профессорĕ Галина Алексеевна Ермакова. Çапла, чăннипех те пысăк та яваплă ĕç пирĕн тăван чĕлхене вĕрентекенсен.

***Список литературы***

1. Егорова А.С. Обучение чувашскому языку в дву- и многоязычной среде / А.С. Егорова // Национальные языки и литературы в условиях би- и полилингвизма: сб. научных трудов / отв. ред. А.Д. Ахвандерова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. гос. пед. ун-т, 2019. – С. 72–75.

2. Исаев Ю.Н. Состояние и перспективы развития системы образования Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев // Образование: теория, методология, опыт / гл. ред. Ж.В. Мурзина. – Чебоксары, 2019. – С. 5–29.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)